Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

62 (8023) № ✻ Юн кун, 2012 ҫулхи ҫурла (август) уйӑхӗн 15-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Вырма – 2012

## 30 процента яхӑн

Районти пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсемпе хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче вырма ӗҫӗсем хӗрӳ тапхӑрта. Ӗнерхи кун тӗлне тӗш тырӑ культурисене 3937 гектар ҫинчен пуҫтарса кӗртме ӗлкӗрнӗ. Ку вӑл пӗтӗм лаптӑкӑн 29 проценчӗ пулать. Ӗҫ ҫи хӑвӑртлӑхӗ «Восток» (58 процент), Ильич яч. хис. (46 процент) хуҫалӑхсенче, «ВаСем» (68 процент), «Колос» (44 процент) чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑсенче, А.И. Толстовӑн (43 процент), А.А. Афанасьевӑн (45 процент), А.Н. Пихтеровӑн (65 процент) хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче япӑх мар.

«Передовик» хуҫалӑхсӑр пуҫне (38 процент) кӗрхи культурӑсен пуссисенче ӗҫ ҫи вӗҫленнӗ.

Ҫурхи тулӑ 353 гектар (9 процент), урпа 1570 гектар (23 процент) вырса ҫапнӑ.

Пӗтӗмпе 6276 тонна тырӑ ҫапса тӗшӗленӗ. Тухӑҫ гектар пуҫне вӑтамран 15,9 центнерпа танлашать. Чи пысӑк тухӑҫ «ВаСем» обществӑра – гектар пуҫне вӑтамран 22,7 центнер.

Улӑма 3359 гектар ҫинчен (ҫапса тӗшӗленин 85 проценчӗ) пухса тирпейленӗ.

Ӗнер район уй-хирӗсенче 38 комбайн ӗҫленӗ.

## Малта – Р. Кузнецовпа Ю. Орлов



*Тыр-пул пухса кӗртес ӗҫсене пахалӑхлӑ тата вӑхӑтра туса ирттерес тӗллевпе районта ҫулленех вырмана хутшӑнакан механизаторсем хушшинче конкурс йӗркелеҫҫӗ. Итогсене эрнесерен пӗтӗмлетеҫҫӗ. Пӗрремӗш эрне – пӗрремӗш ҫӗнтерӳсем. Августӑн 2–8-мӗшӗсен итогӗсемпе Суворов яч. хис. пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхри Радонеж Кузнецов экипажӗ малта. Вӑл хӑйӗн пулӑшаканӗпе Юрий Орловпа ҫав тапхӑрта условнӑ 286,8 тонна (пӗтӗмпе 499 тонна) тырӑ вырса ҫапнӑ.*

**В. ШАПОШНИКОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Хӗл кунӗсем умӗн

## Фермӑсем хатӗр пулччӑр

Районти ял хуҫалӑх предприятийӗсенче выльӑх-чӗрлӗх фермисемпе комплексӗсене хӗл кунӗсем валли хатӗрлес ӗҫсем анлӑ сарӑлнӑ. Обществӑлла выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма лайӑхрах условисем туса парас тӗллевпе район администрацийӗ июлӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса августӑн 20-мӗшӗччен агропромышленноҫ комплексӗн предприятийӗсен выльӑх-чӗрлӗх фермисемпе комплексӗсене хӗллехи тапхӑр валли хатӗрлессипе уйӑхлӑх ирттерме палӑртнӑ.

Августӑн 21-мӗшӗнчен тытӑнса вара ятарлӑ комисси членӗсем хӗле хатӗрленсе вырӑнсенче мӗнле ӗҫсем туса ирттернипе паллашӗҫ. Вӗсем фермӑсемпе комплекссенче пулса курӗҫ кӑна мар, зоотехникӑпа зоогигиена нормисене, ветеринари тата пушар хӑрушсӑрлӑхӗн требованийӗсене мӗнле пӑхӑннине те тӗрӗслӗҫ.

Августӑн 13-мӗшӗ тӗлне вара мӑйракаллӑ шултра выльӑхсен 44 объектӗнчен 83 проценчӗ, вӑл шутран ӗнесен 17 объектӗнчен 88 проценчӗ, сыснасен 25 объектӗнчен 73 проценчӗ, лашасемпе чӑх-чӗпсен тата кроликсен пур объекчӗ те хӗле хатӗр пулнӑ.

Информаци кунӗ

## Паянхи ыйтусемпе

Республикӑри пекех, пирӗн районта та паян черетлӗ информаци кунӗ иртет. Унӑн теми анлӑ. Информаци кунӗн темисене кӗртнӗ ыйтусем шутӗнче республикӑн 2012 ҫулхи пӗрремӗш ҫур ҫулти экономикӑпа социаллӑ пурнӑҫ аталанӑвӗн итогӗсемпе республика бюджетне кӑҫалхи пӗрремӗш ҫур ҫулта мӗнле пурнӑҫлани те, хӗле хатӗрленесси те, вӗрентӳ учрежденийӗсене ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ валли хатӗрлесе ҫитересси те, урамсемпе картишсене тирпей-илем кӗртесси те, кӗрхи уй-хир ӗҫӗсем епле пыни те.

Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн социаллӑ политика тата национальноҫ ӗҫӗсен комитечӗн председателӗн ҫумӗ Игорь Кушев ертсе пыракан ушкӑн представителӗсем паян район администрацийӗн тата федераллӑ структурӑсен районти уйрӑмӗсен ответлӑ ӗҫченӗсемпе тата представителӗсемпе пӗрле Муркаш, Ҫатракасси, Оринин, Турай, Москакасси, Хорнуй ял тӑрӑхӗсене ҫитсе кураҫҫӗ, ӗҫ коллективӗсенче пулаҫҫӗ, ял ҫыннисемпе тӗл пулаҫҫӗ, ҫынсене хӑйсен ыйтӑвӗсемпе йышӑнаҫҫӗ.

## Р. Тимофеев: «Пӗр саплӑк ҫӗре те куҫран вӗҫертмелле мар»

***Ял хуҫалӑх пӗлтерӗшлӗ ҫӗрсемпе тӗллевлӗ усӑ курас ыйтӑва паян Республика Пуҫлӑхӗ М.В. Игнатьев питӗ пысӑк тимлӗх уйӑрать. Иртнӗ кӗҫнерни кун Министрсен Кабинечӗн канашлӑвӗнче те Михаил Васильевич Правительство членӗсемпе района ертсе пыракансене ҫӗре арендӑна панӑ е харпӑрлӑха куҫарнӑ чухне саккуна ҫирӗп пӑхӑнмалли ҫинчен аса илтерчӗ. Унтан маларах министрсемпе ирттернӗ канашлура вара районсенче ку ыйтупа ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсемпе ятарлӑ канашлу ирттермеллине те палӑртса хӑварнӑччӗ. Михаил Васильевич август пуҫламӑшӗнче пирӗн районта пулнӑ чухне те ҫӗрпе эффективлӑ усӑ курас ыйту тӗп вырӑнта пулчӗ.***

Калас пулать, ҫӗр ыйтӑвӗсемпе йӗрке тӑвас «лав» кӑҫал ҫуркунне район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. Тимофеев ҫине тӑнипе тапранчӗ. Республика пуҫлӑхӗ Муркашсен ҫак утӑмне ырларӗ. Иртнӗ эрне кун ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсемпе ирттернӗ канашлура та тӗп вырӑнта ҫӗр ыйтӑвӗсемех пулчӗҫ.

– Нумай ачаллӑ ҫемьесем валли ҫӗр лаптӑкӗсем хатӗрлесе вӗсемпе тивӗҫтерес, пушӑ выртакан пай ҫӗрӗсене муниципаллӑ харпӑрлӑха куҫарас, ҫӗрпе тӗллевлӗ усӑ курас енӗпе ку таранччен туса ирттернӗ ӗҫсем туса ирттермелли пысӑк калӑпӑшлӑ ӗҫсен пӗр пӗчӗк пайӗ ҫеҫ-ха. Ҫӗр ыйтӑвӗпе районта йӗрке пулмалла, ку ыйтӑва пирӗн татса памаллах, – терӗ ҫирӗппӗн Ростислав Николаевич канашлу пуҫламӑшӗнче.

Чи малтанах вӑл кашни ял тӑрӑхӗнче ялта пурӑнакансене ҫурт лартма, ҫавӑн пекех нумай ачаллӑ ҫемьесем валли ҫӗр лаптӑкӗсене кӗске вӑхӑтрах йӗркелемеллине палӑртрӗ.

Пушӑ выртакан пай ҫӗрӗсене муниципаллӑ харпӑрлӑха куҫарассипе те ҫанӑ тавӑрсах ӗҫлемелле. Мӗншӗн тесен паянхи куна 1436 пай ҫӗрӗсен (пурӗ 5323 га) ҫеҫ хуҫисем пур. 11461 пай ҫӗрӗ вара (пӗтӗм ҫӗр пайӗн 76 проценчӗ) никама та кирлӗ мар пек курӑнать. Урӑхла каласан 21699,46 га ҫӗре харпӑрлӑха куҫарман.

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ – экономикӑпа АПК аталантарассин тата муниципаллӑ харпӑрлӑх управленийӗн ертӳҫи В. Ананьев паянхи куна хуҫисене кирлӗ мар шутланакан пай ҫӗрӗсене, урӑхла каласан, харпӑрлӑха куҫарман пай ҫӗрӗсене муниципаллӑ харпӑрлӑха куҫарас ыйтупа график тӑрӑх ял тӑрӑхӗсене тухса ӗҫлеме сӗнчӗ. Ҫавӑнпа та вырӑнта халӑхпа тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлени кирлӗ.

Канашлура кашни ял тӑрӑхӗнче ку таранччен ҫӗр ыйтӑвӗсемпе мӗн туни ҫинчен тата мӗн тумалли ҫинчен кашни ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ отчет туса пачӗ. Ку таранччен пӗр Хорнуй ял тӑрӑхӗнче кӑна 14-ӑн хӑйсене пай ҫӗрӗсем кирлӗ маррине ҫирӗплетнӗ. Ытти ял тӑрӑхӗсенче ку ӗҫ пуҫланман та. Ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсенчен кашниех ҫак эрнере хуҫисене кирлӗ мар шутланакан пай ҫӗрне (харпӑрлӑха куҫарман пай ҫӗрӗсене) муниципаллӑ харпӑрлӑха куҫарас енӗпе малтанхи ӗҫсене миҫе ҫынпа туса ирттермеллине палӑртрӗ.

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. Тимофеев хуҫисене кирлӗ мар шутланакан (харпӑрлӑха куҫарман) пай ҫӗрӗсемпе вӗсене муниципаллӑ харпӑрлӑха куҫарас енӗпе суда тӑратмалли документсене сентябрӗн 15-мӗшӗччен хатӗрлесе пӗтермеллине палӑртрӗ.

Халӗ сӑмахӑмӑра арендӑна илнӗ ҫӗрсем ҫине куҫарар. Ку енӗпе те ял тӑрӑхӗсенче ӗҫ мӑй таранах. 60 соттӑй ҫӗре арендӑна илнисем ҫеҫ районӗпе 8166 ҫӗр лаптӑкӗ шутланать. Вӗсенчен тивӗҫлӗ килӗшӗве 1000 ҫӗр лаптӑкӗпе ҫеҫ тунӑ. Апла пулсан ытти 7 пин ытла лаптӑкӗпе е тӳлевсӗр усӑ кураҫҫӗ, е паян та пушӑ выртаҫҫӗ вӗсем.

**(Вӗҫӗ 3-мӗш стр.)**

Туса ирттернӗ ӗҫе пӗтӗмлетсе

## Инкек-синкек тата ҫын кун-ҫулӗ

***Уйрӑмах ҫу кунӗсем пирӗнтен тимлӗх ыйтаҫҫӗ, шӑрӑх ҫанталӑка пула ҫак тапхӑрта вут-ҫулӑм ытларах алхасать, шыва кӗрес тапхӑр хӑрушлӑх кӑларса тӑратать. Инкек-синкек пуласран маларах сыхланни вырӑнлӑ, анчах та тӗрлӗ сӑлтава пула пирӗн пурпӗрех йывӑрлӑхпа тӗл пулма тивет. Ҫавӑнпа та хӑрушсӑрлӑх ыйтӑвӗ чи малти вырӑнта пулмалла, мӗншӗн тесен ҫакӑ ҫын кун-ҫулӗпе ҫыхӑннӑ. Ку енӗпе район администрацийӗн ятарлӑ программӑсен секторӗ чылай ӗҫ пурнӑҫлать. Эпӗ унӑн ертӳҫипе Николай МИЛЮТИНПА калаҫрӑм, чрезвычайлӑ комисси ӗҫ-хӗлӗпе кӑсӑклантӑм.***

– Кӑҫалхи ҫу вӑхӑчӗн шутлӑ кунӗсем иртсе пыраҫҫӗ. Кӗҫех чылая пынӑ шӑрӑх самантсем хыҫала юлӗҫ, умра – кӗркунне.

Район администрацийӗн ятарлӑ программӑсен секторӗн ертӳҫи пулнӑ май, районти чрезвычайлӑ комиссие хутшӑнса эпӗ юлашки вӑхӑтра хӑрушсӑрлӑх ыйтӑвӗсемпе тӗрлӗ ӗҫ туса ирттернӗ.

Паллах чи малтанхи сӑмах пушар тухас хӑрушлӑх тата шывра асӑрхануллӑ пулмалли ҫинчен. Ҫакна палӑртмалла, асӑннӑ ыйтусем тавра маларахах ҫине тӑрса ӗҫленӗ. Чрезвычайлӑ лару-тӑру патне ҫитессине сирес, ҫын пурнӑҫне тата сывлӑхне сыхласа хӑварас, пурлӑха инкек-синкекрен упрас тӗллевпе тӗллевлӗ ӗҫ пурнӑҫланӑ.

Районти чрезвычайлӑ комисси ларӑвӗнче ҫак ыйтусемпе ҫулсерен пулса иртекен фактсене тишкерсе тухнӑ, ҫитменлӗхсене палӑртнӑ. Район администрацийӗн 2012 ҫулхи апрелӗн 27-мӗшӗнчи 391-мӗш номерлӗ йышӑнупа килӗшӳллӗн комисси йышӑнӑвне, унта кӑтартнӑ ҫул-йӗре ял тӑрӑхӗсене, шкулсене, организацисемпе предприятисене, пушар хуралӗнче вӑй хуракансене пӗлтернӗ, массӑллӑ информаци хатӗрӗсенче вырнаҫтарнӑ.

Ҫуллахи каникула каяс умӗн пушар тата шыв ҫинчи хӑрушсӑрлӑх темисемпе ачасемпе калаҫу ирттернӗ, ӗҫ тата кану лагерӗсенче те вӗсем ҫинчен аса илтерсех тӑнӑ, тӗл пулусем йӗркеленӗ. Ҫавӑн пекех шӑрӑх кунсенче граждансем йышлӑн шыва кӗмелли вырӑнсенче водолазсен вӑйӗпе шыв айӗнчи ҫырана тӗрӗсленӗ, тасатнӑ. Шыв ҫывӑхӗнче хывӑнса тӑхӑнмалли кабинӑсем, шыва кӗрсе тухмалли кӗперсем тума, ятарлӑ щитсем ҫинче шыва кӗнӗ чухнехи хӑрушсӑрлӑх правилисене, ӑнсӑртран тӗл пулакан инкекре пӗрремӗш пулӑшу памалли йӗркене тата ытти сӗнӳсене вырнаҫтарма палӑртнӑ.

Унтанпа вӑхӑт самай иртрӗ. Авӑн уйӑхӗ пырать. Ҫак кунсенче район шайӗнчи чрезвычайлӑ комиссин черетлӗ ларӑвӗ пулчӗ. Кун йӗркинчи: "Пушар тата шыв ҫинчи лару-тӑру" ыйтӑва пӑхса тухнӑ. Калас пулать, пушар тухас хӑрушлӑх ҫав ҫавах пысӑк, ыйтӑва вара татса пама кӑткӑс. 2011 ҫулта районта 39 пушар тӗслӗхне палӑртнӑ. Паянхи кун тӗлне вара ирӗке кайнӑ вут-ҫулӑм 22 хут алхасрӗ, 3 ҫыннӑн пурнӑҫӗ вӑхӑтсӑр татӑлчӗ.

Шыв-шур ҫинчи лару-тӑру пӗлтӗрхипе танлаштарсан йывӑртарах. Кӑҫал тӗрлӗ сӑлтава пула 5 ҫын, вӑл шутра 1 ача кун-ҫулӗ сарӑмсӑр вӗҫленчӗ. Паллах пурнӑҫ тилхепи хамӑр алӑрах, ответлӑха ҫын ҫине яраймӑн. Анчах та ҫулӑм алхасса пурлӑх кӗлленесрен, ҫын пурнӑҫне сыхласа хӑварас тӗллевпе кӳршӗ, тус-юлташ, ответлӑ вырӑнта ӗҫлекенсем пурне те тума пултарнӑ-и-ха? Ҫакӑн пек ыйту ҫуралма тивӗҫ пурин те.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаҫнӑ.**

# Вырăнти хăй тытăмлăх: *Шетмĕпуç ял тăрăхĕ*

## Ĕçлеменнин кăна ыйту çук



*Паянхи калаçу – Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Николай Александровпа. Ку должноçре вăл 2005 çулхи октябрĕн 16-мĕшĕнченпе вăй хурать. Унпа тĕл пулнă май эпĕ ял тăрăхĕн паянхи пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарма, ял пурнăçĕпе çыхăннă мĕнле ыйтусемпе ытларах тимлеме килнине, умри тĕллевсемпе задачăсене уçăмлатма ыйтрăм.*

**– Николай Поликарпович, традицие кĕнĕ япала темелле. Ял тăрăхĕ пирки калаçу пуçарас пулсан газ, шыв, çул-йĕр, электроэнергипе тивĕçтерессин ыйтăвĕсене хускатмасăр ниепле те май çук. Ку ыйтусем пулнă, пур, пулаççĕ те темелле-ши?**

– Çаксем ĕнтĕ вĕсем ял çыннин паянхи ыйтăвĕсем. Газ ыйтăвне илес пулсан ку ыйтăва темиçе çул каяллах татса панă темелле. Ял тăрăхĕнчи 8 яла пурне те çут çанталăк газĕ пырса тăрать.

Çулсем пирки çавна калама пултаратăп. Кашни ял патнех асфальт сарнă çулсем çитернĕ. Ытларах çĕрте тĕп урамсенче те асфальт сарса панă. Анчах пур çĕрте те мар. Çавна май çул ыйтăвĕ кун йĕркинчен тухма пултараймасть.

Ку енĕпе ĕçлеместпĕр мар. Акă Турхан ялне пысăк çырма уйăрса тăрать. Йĕпе-сапа, шыв-шур вăхăтĕнче каçса çӳреме питех те тертлĕччĕ. 2010 çулта ыйтăва хамăр вăйпах татса пама пултартăмăр. Каçса çӳремелли çула йĕркене кĕртме сахалтан та 450 тонна вак чул сартăмăр. Асфальт мар пулин те, йĕпе-сапа вăхăтĕнче çынсем пĕçĕ кукри таран пылчăк çăрмаççĕ халĕ.

Черетре – Катăкуй, Тивĕш ял урамĕсем. Кунти çулсене те май тупса хамăрăнах йĕркене кĕртмелле пулать. Çынна шаннипе май килмест. Бюджетра укçи-тенки пурин валли çитсе пымасть пулин те, алă усса ларма шухăшламастпăр.

*Кĕске справка. Н.П. Александров 1974 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче çуралнă. 1991–1995 çулсенче – Канашри педагогика училищин студенчĕ. 1992–1994 çулсенче Тинĕс-çар флотĕнче службăра тăнă. 2001 çулта И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн физвоспитани факультетне вĕренсе пĕтернĕ.*

*1995–2005 çулсенче Шетмĕпуç шкулĕнче ачасене вĕрентнĕ. 2005 çултанпа – Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.*

**– Çул ыйтăвне хускатнă май çавна пĕлес килет. Хĕлле ял урамĕсене юртан тасатса тăрассипе хăш-пĕр ял тăрăхĕсенчи пек пăтăрмахсем пулмарĕç-и иртнĕ çул?**

– Пăтăрмахсемех пулчĕç тесе каламан пулăттăм. Ялсем патне çити çулсене çул-йĕр службин техники тасатса тăрать. Ял урамĕсенчи çулсене юртан тасатса тăрассипе вара конкурсра «ИдеалСтрой» СК ООО çĕнтерчĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне япăх пурнăçларĕç тесе калама пултараймастăп. Паллă ĕнтĕ, 8 ялти пур урама та пĕр харăс тасатса тухма май çук. Çавăнпа та хăшĕсене каярах юлса тасатни пулнă. Ку вăл вăрттăнлăх мар.

**– Халĕ шыв ыйтăвĕ çине куçар пулĕ.**

– Ытти çĕрти пекех, пирĕн патра та ку енĕпе ĕçлемелли пур. Ялсенче унччен хурса хăварнă шыв пăрăхĕсем кивелсе çĕрĕшсе юрăхсăра тухса пыраççĕ. Вĕсене вĕçĕм юсаса тăма тивет. Карманкассипе Катăкуйĕнче шыв пăрăхĕ пачах юрăхсăра тухнă. Автанкассипе Турхан ялĕнчи Мичурин урамĕнче шыв пăрăхĕсем пулман та. Шыв ыйтăвне вара республика пулăшăвĕсĕр те пĕтĕмпех татса парасси иккĕленӳллĕ. Пысăк укçа-тенкĕпе çыхăннă ку ĕçсем.

**– Çĕнĕ урамсене электрификацилессипе 2010–2012 çулсем валли республикăн тĕллевлĕ ятарлă программине йышăннăччĕ. Сирĕн патра миçе урама çутă парса тăма тытăнмалла?**

– Кун пек çĕнĕ урамсем Тивĕшре, Автанкассинче, Катăкуйĕнче, Шетмĕпуçĕнче, Сарчакра пур. Пурин тĕлĕшпе те проектпа смета документацине хатĕрлесе панă. Ĕçсене «Чувашэнерго» ООО пурнăçлать. Катăкуйпе Автанкассинче ку ĕçсене вĕçленĕ ĕнтĕ. Ытти çĕрте те ĕçсем палăртнă вăхăтра вĕçленме тивĕç.

**– Пĕччен суран – тип-сех пырать, тенĕ ваттисем. Ял тăрăхĕ умĕнче тăракан задачăсене те пĕчченех татса пама май çук пулĕ. Хăвăра ĕçре пулăшакансем, çынсене пĕрлехи ĕçсене хутшăнтарма пулăшакансем тесе камсем пирки калама пултаратăр?**

– Пирĕн ял тăрăхĕн территорийĕнче депутата 10 çынна суйланă. Вĕсенчен Николай Клементьев, Александр Нестеров, Сергей Разумов пирки тав сăмахĕ кăна калама пултаратăп.

**– Николай Поликарпович, татах тепĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтăва хускатмасăр май çук. Хăвăр патра эсир пушар хăрушсăрлăхне мĕнлерех тивĕçтеретĕр?**

– Тӳрех каласа хăваратăп, ятарлă пушар машини çук. Çавăнпа та мотопомпа туянтăмăр. Ăна ятарлă шыв цистерни çине вырнаçтарса лартса кустăрмаллă тракторпа туртса çӳремелле тăвасшăн. Кун пек пушар сӳнтермелли мобильлĕ агрегатсенчен пĕрне Мичурин яч. хис. агрофирма ертӳçи Борис Михайлов тата ял тăрăхĕ енĕпе хресчен (фермер) хуçалăх ертӳçи Владимир Горбунов хатĕрлеме пулчĕç.

**– Чăваш Республикинчи муниципаллă йĕркелӳсен пуçлăхĕсен йышĕнче опытпа паллашма хăвăр Алтай крайне кайса килни пирки кĕскен те пулин каласа параймăр-и?**

– Регионта эпир июлĕн 21–22-мĕшĕсенче пултăмăр. Пĕтĕмпе делегаци шутĕнче 36 çын. Эпир Муркаш районĕнчен Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Г.Г. Лебедевпа инçе çула кайса килтĕмĕр.

Çул çӳреври Алтай крайĕн кĕпĕрнаторĕн çумĕпе Борис Ларинпа тата Алтай крайĕнчи муниципалитетсен пуçлăхĕсемпе ĕçлĕ тĕл пулу иртрĕ. Чăваш Ен делегачĕсем крайри патшалăх тата муниципаллă услугăсем памалли нумай функциллĕ центра çитсе курчĕç, вĕсем патĕнче ку ĕçе мĕнле йĕркеленипе интереслензе паллашрĕç.

Июлĕн 22-мĕшĕнче Сростки ялне çитрĕмĕр. Кунта В.М. Шукшинăн Пĕтĕм Раççейри мемориал-музейĕн экспозицийĕпе интересленсе паллашрăмăр. Пикет тăвĕ çинче вара «Родина – это серьезно» художествăпа публицистика программине хутшăнтăмăр.

Программăн уйрăм пункчĕ – Полковниково ялĕнчи Г.С. Титов музейне çитсе курни. Ку пирĕншĕн интереслĕ пулчĕ. Мĕншĕн тесен Чăваш Енĕн те хăйĕн космонавчĕ Андриян Николаев пур.

Г.С. Титовăн музейĕнче июлĕн 22-мĕшĕнче Алтай крайĕн тата Чăваш Республикин муниципаллă йĕркелĕвĕсен канашĕсен ассоциацийĕсен представителĕсем пĕрпĕринпе килĕштерсе ĕçлесси пирки килĕшӳ çине алă пусрĕç.

**– Хамăрăн калаçăва вĕçленĕ май юлашкинчен мĕн хушса калас кăмăлăр пур?**

– Татса пама май çук ыйтусем пулмаççĕ теççĕ. Эпир пĕр шухăшлă пулса пĕр ĕмĕт-тĕллевпе ĕçлесе пырсан, шанатăп, пур ыйтăва мар пулин те, вĕсенчен ытларахăшне татса пама пултарайратпăрах. Такам çине мар, ытларах хамăр çинех шанас пулать.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

## Шкулти пурнăç интереслĕ

Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулăн историйĕ те, унти пурнăç та интереслĕ те пуян. Хусан епархи училищин канашĕн Етĕрнери уес уйрăмĕн архив фончĕн документчĕсемпе килĕшӳллĕн ăна 1884 çулта уçнă. 1901 çулта унта 24 арçын ачапа 3 хĕр ача вĕреннĕ.

Хут вĕрентекен шкулăн заведующийĕ тата саккун учителĕ Евгений Рождественский священник пулнă. Вăл Хусанти тĕн семинари курсне вĕренсе пĕтернĕ. Учитель пулса хресченсенчен тухнă саппасри аслă унтер-офицер, земство курсĕнчен вĕренсе тухнă Никифор Ефимов ĕçленĕ. Шкулĕ те унăн çуртĕнче вырнаçнă пулнă.

1902 çулта шкула хупнă. 1924 çулта шкулăн çĕнĕ çуртне туса лартнă хыççăн ăна çĕнĕрен уçнă. 1937 çулта шкулта 7 çул вĕрентме пуçăннă. 1940 çулта шкул коллективĕ РСФСР Наркомпросăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне çĕнсе илнĕ. 1947 çулта шкул 8 çул вĕренмелли учреждени пулса тăнă. 1980 çулта шкул икĕ хутлă çĕнĕ çурта куçнă, вĕрентӳ ĕçне кабинетлă системăпа йĕркеленĕ. 1985 çулта лайăх ĕçшĕн шкула РСФСР тата ЦК куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕпе наградăланă. 1996 çулта шкул «Хĕвел» ясли-садпа пĕрлешнĕ. Çавăн чухнех шкул районта пĕрремĕш хуçалăх ĕçне-хĕлне йĕркелессин çĕнĕ условийĕсемпе ĕçлеме тытăннă. 2001 çултанпа – «Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕ, 2010 çултан тытăнса – муниципаллă бюджет вĕрентӳ учрежденийĕ. Шкул коллективне 1996 çултанпа Антонина Степанова ертсе пырать (сăмах май вăл асăннă шкулта 1983 çултанпа ĕçлет).

Вĕрентӳ ĕçченĕсен коллективне пултаруллă та ăста кадрсемпе комплектланă. Ачасене кунта тарăн та çирĕп пĕлӳ илме пур майсене те туса панă. 13 педагогран пурте аслă пĕлӳллĕ специалистсем. Вĕсем хушшинче тĕрлĕ шайри Хисеп грамотисене, кăкăр çине çакмалли знаксене тивĕçнисем сахал мар.

Шкулта ачасен Раççей Геройĕ Евгений Борисов ячĕллĕ пĕрлешĕвне йĕркеленĕ. Унăн тĕп тĕллевĕсем шутĕнче ачасенче ответлăх, хăй тĕллĕнлĕх, пуçарулăх туйăмĕсене çирĕплетесси, тавра курăма анлăлатасси, культура шайне ӳстерессси, социаллă активлă, ăс-тăнпа нравственноç тĕлĕшпе çирĕп çынсем çитĕнтерессси пулса тăраççĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 60 çул çитнĕ май шкулта Раççей Геройĕ Евгений Борисов ячĕллĕ спортпа патриотика клубĕ йĕркеленĕ. Вăл шкулта вĕренекенсемпе шкул микрорайонĕнчи яш-кĕрĕме пĕрлештерсе тăрать.

Шкул ял администрацийĕ çумĕнчи ветерансен канашĕпе тачă çыхăну тытать. Вĕренекенсем ĕçпе вăрçă ветеранĕсене, тыл ĕçченĕсене, инвалидсемпе ватă çынсене вăй çитнипе тимурла пулăшу параççĕ, ял çыннисене художество пултарулăх номерĕсемпе савăнтараççĕ.

Вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем – шкулта кĕтнĕ хăнасем. Вĕсенчен ытларахăшĕ шкулпа тачă çыхăну тытать. «Пирĕн аннесем – пуринчен лайăххисем» конкурс яланах савăнăçлă та интереслĕ иртет.

Çу кунĕсенче вĕренекенсем хăйсен каникул кунĕсене шкул çумĕнчи «Солнышко» ĕçпе кану лагерĕнче тата «Космос» профиль лагерĕнче интереслĕ те усăллă ирттереççĕ.

Пĕр сăмахпа, вĕренӳ кунĕсенче кăна мар, çуллахи каникул кунĕсенче те шкулта пурнăç вĕресе кăна тăрать. Шкула çӳрекенсене кунта нихăçан та кичем мар, кичем пулмĕ те.

## «Хĕвел» ăшшине парнелет

Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул çумĕнче пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ шкул çулне çитмен ачасен «Хĕвел» ача сачĕ» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕ ĕçлет. Ăна пĕрремĕш квалификаци категори специалисчĕ Галина Смирнова ертсе пырать. Педагогсем вара унта пĕтĕмпе виççĕн. Валентина Тимофеевăпа Лариса Кириллова та аслă пĕлӳ илнĕ специалистсем, хăйсен ĕçне ответлăха туйса пурнăçлаççĕ.

Ача садĕнче икĕ ушкăн йĕркеленĕ. Пĕр ушкăнĕ кĕçĕн çулхи ачасем валли, тепри вара ачасене шкула çӳреме тытăниччен кĕске вăхăт тытмалли ушкăн. Шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕн тĕп тĕллевĕ – пĕчĕккисене шкула кайма хатĕрлесе çитерессси, ашшĕ-амăшне ачасене воспитани парассинче пулăшу кӳресси. Çавăнпа та кунта ташлама-юрлама тата ӳкерме хăнăхтарнипе пĕрлех ачасен тавра курăмне аталантарассине, фикультурăпа туслаштарассине, сывлăхĕсене çирĕплетессине те хăйсен пĕрремĕш задачи вырăнне хурса ĕçлеççĕ.

Хальхи вăхăтра кам мĕнле пĕлнĕ пек уйрăм тытăмра пурăнма май çук. Пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлесе пыни кирлĕ. Çавна май ача сачĕн социаллă партнерĕсем шутĕнче Шетмĕпуç шкулĕ те, тĕслĕх библиотека та, пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕ те, Культура çурчĕ те.

Ушкăнсенче ачасем валли дидактика вăййисемпе пособийĕсем, сĕтел çинче усă курмалли пичет вăййисем сахал мар. Вĕсем социаллă, кăмăлтуйăм тата нравственноç воспитанийĕ тĕлĕшпе пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Ача садĕнче кунта çӳрекенсен ӳкерчĕкĕсен, сăн ӳкерчĕкĕсен, вактĕвек хатĕрĕсен выставкисене тăтăшах ирттереççĕ. Воспитательсем ачасен хăй тĕллĕнлĕхне, пуçарулăхне хаклаççĕ, вĕсенче ку енсене аталантарса пыма тăрăшаççĕ.

Ача садне çӳрекенсенчен ытларахăшĕ ăна хăйĕн иккĕмĕш килĕ вырăнне йышăнать. Ку вара – чи кирли.

## «Эпир спортпа туслă»

Çапла пĕлтереççĕ ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакансем. Чăн сăмахăн суйи çук. Чăннипех те кунта спорт хисепре. Ăмăртусем тенĕрен, тĕрлĕ енпе вĕсене массăллă кашни мероприятисемпе уявсенче те йĕркелеççĕ. Кунсăр пуçне арçынсем тата хĕрарăмсем кăна хутшăнакан ятарлă ăмăртусем те пур. Акă февралĕн 23-мĕшĕнче ял тăрăхĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн арçынсем вăй виçеççĕ. Вĕсем йĕлтĕрпе ăмăртса чупаççĕ, волейболла, шахматла выляççĕ, пневматикăллă винтовкăран переççĕ, сĕтел çи теннисла выляса вăй виçеççĕ.

Хĕрарăмсем мартăн 8-мĕшĕнче хĕрарăмсен канашĕн председателĕн кубокне çĕнсе илессишĕн старта тухаççĕ. Ăмăртусен программи пуян.

Март уйăхĕнче Сарчак ялĕн кунне уявланă чухне вара Сарчак ялĕн кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăрту пулать.

Хĕл ăсатăвĕн уявĕнче те спортпа туслисем тĕрлĕ енпе вăй виçеççĕ. Вĕсене пурте хутшăнма пултараççĕ. Кашни ял хăйĕн командине тăратать. Питĕ интереслĕ те илĕртӳллĕ ирттереççĕ ăмăртусем.

Кăларăма В. Шапошников хатĕрленĕ.

Ĕçпе тивĕçтерекен центрта

# Патшалăх пулăшăвĕ: меллĕ, ансат, çăмăл

***Патшалăх пулăшăвĕпе электронлă майпа тивĕçтерессипе çыхăннă ыйтусене хăйĕн страницисенче районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат пĕр хут кăна мар хускатрĕ ĕнтĕ. Патшалăх учрежденийĕсенчен чылайăшĕ унпа анлă усă курма тăрăшать. Ку енĕпе Чăваш Республикин халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби – малтисенчен пĕри. Патшалăх пулăшăвне электронлă мелпе илмелли майсем çинчен асăннă службăн районти ĕçпе тивĕçтерекен центрĕн ертӳçине Ираида Николаевна ДИМИТРИЕВĂНА каласа пама ыйтрăм.***

**– Ираида Николаевна, хальхи вăхăтра çĕнĕрен çĕнĕ ĕç мелĕсем анлăн пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Пурнăçпа тан ĕлкĕрсе пыр кăна. Сирĕн служба ку тĕлĕшпе малтисен ретĕнче пулни савăнтарать. Электронлă майпа тивĕçтерекен мĕнле услугăсем пирки сăмах пырать-ха?**

– Çак вăхăта Чăваш Республикин патшалăх услугисен порталĕнче ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕсен 17 тĕрлĕ услуги пирки информаци вырнаçтарнă. РФ Правительствин 2011 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнчи тата ЧР Министрсен Кабинечĕн 2010 çулхи майăн 28-мĕшĕнчи хушăвĕсемпе электронлă мелпе тивĕçтермелли патшалăх тата муниципаллă услугăсем шутне çаксене кĕртнĕ:

– тӳлевлĕ обществăлла ĕçсене хутшăнасси пирки заявленисем йышăнасси;

– вĕренӳрен пушă вăхăтра 14–18 çулсенчи çамрăксем, ĕç тупма уйрăмах кансĕр çынсем, профессин пуçламăш, вăтам пĕлӳ учрежденийĕсенчен вĕренсе тухнă хыççăн пуçласа ĕç шыракан 18–20 çулсенчи граждансем валли вăхăтлăх ĕç вырăнĕсем йĕркелесси тата çавна валли заявленисем йышăнасси;

– обществăлла ĕçсене тӳлевлĕ irттерессине йĕркелесси çинчен информаципе тивĕçтересси тата заявленисем йышăнасси;

– гражданина тивĕçлĕ ĕç тупма пулăшасси, вакансисен ярмăрккисене ирттересси пирки, ваканси пурри, ĕç паракан кăтарту базинчи хыпарсем çинчен пĕлтересси;

– ĕç паракана хăйне кирлĕ специалистсене (ĕç шыракансемпе унпа тивĕçтерекенсен кăтартăвĕсенчи базинчи сведенисем тăрăх) тупма пулăшасси.

**– Услугăсемпе электронлă майпа тивĕçтерни çынсемшĕн мĕн енчен усăллă тесе шутлатăр?**

– Малтанах çавна палăртса хăварам. Электронлă майпа 5 тĕрлĕ услугăпа тивĕçтерни вăл пысăк ĕçĕн пуçламăшĕ кăна. Малашне услугăсен шучĕ ӳссех пырĕ.

Патшалăх услугисемпе усă курма, вăл е ку документа йĕркелеме е информаципе паллашма гражданинăн халĕ ĕçпе тивĕçтерекен центра каймалла. Çакă çула тухассипе, черет тăрассипе, заявленисем çырассипе, анкетăсем тултарассипе, вăхăт нумай ирттерессипе çыхăннă. Укçа тăкакласси сĕр те пулмасть кун пек чухне. Апла пулсан ку вăл çынсемшĕн меллех мар.

**– Улугăсемпе электронлă майпа усă курас тесен малтан регистрацин вăраха тăсăлакан тата кăткăс процедури витĕр тухмалла пулĕ?**

– Регистрациленессипе чăрмав çук. Вĕренӳ роликĕсемпе тата пулăшупа усă курсан порталта регистрациленме ансат та, меллĕ те. Эсир çакна «онлайн» режимпа е «Ростелеком» уçă акционер обществин офисĕнче тума пултаратăр. Онлайн-регистрацине усă курас кăмăл пулсан порталти электрон регистрацийĕн карточкин хĕррисене тĕрĕс çырмалла, электрон почтине тата кĕсье телефонĕн номерне кăтартмалла. Çакăн хыççăн икĕ эрнерен Раççей почти урлă çырупа активаци кодне ярса параççĕ.

Патшалăх услугисен порталĕпе усă курнă чухне ĕçпе тивĕçтерекен центра автоматла режимпа, вăхăта сая ямасăр гражданин патшалăх услугисем илесшĕнни пирки пĕлтерни (уведомлени) килет. Ĕçпе тивĕçтерекен центр специалисчĕ тӳрех запрос ыйтăвĕсемпе ĕçлеме тытăнать. Гражданинăн хăйĕн кабинетĕнче унăн ыйтăвне татса парасси мĕнле пынине тĕрĕслесе тăма май пур. Çапла вара патшалăх услугипе хваттертен е килтен тухмасăрах усă курма май пур. Меллĕ, ансат, нимĕн те калаймăн.

**– Ираида Николаевна, ку çĕнĕлĕхсем пирки тулли информацие ăçта илме пулать-ха?**

– Улугăсен даннăйĕсене Раççей Федерацийĕн патшалăх услугисен порталĕнче (www.gosuslugi.ru) вырнаçтарнă. Кунпа пĕрлех регистрациленесси, РФ патшалăх услугисен порталĕнче ĕçлесси пирки кирлĕ информаципе районти ĕçпе тивĕçтерекен центр та тивĕçтерме пултарать. Адресĕ: Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 6-мĕш çурт, 329-мĕш кабинет.

«Патшалăх тата муниципаллă услугăсем парассине йĕркелесси çинчен» Федераллă саккуна пурнăçласа пырса патшалăх услугисемпе электронлă майпа тивĕçтерессин социаллă реклами тĕлĕшпе районти ĕçпе тивĕçтерекен центр уйрăм ĕçсем туса ирттерчĕ. Центр специалисчĕсем РФ патшалăх услугисен порталĕнче регистрациленчĕç. Патшалăх услугисене электронлă мелпе илме май пурри пирки ĕç паракансене хыпарлас тĕллевпе тулли информацие ĕçпе тивĕçтерекен центрăн стенчĕ çинче тата Интернет-страницăра вырнаçтарнă. Ĕç паракансен представителĕсем центра пырса çӳренĕ чухне вĕсене электронлă услугăсен мелĕсем пирки ăнлантарса пама тăрăшатпăр. Кунпа пĕрлех ăнлантару ĕçне центра пыракан граждансемпе те ирттеретпĕр. РФ патшалăх услугисен порталĕнче регистрациленесси пирки ăнлантарса парассипе вырăнсене тухса ял тăрăхĕсен специалисчĕсемпе, уйрăм граждансемпе консультацисем ирттеретпĕр.

**– Сирĕн центр умĕнче тăракан пĕлтерĕшлĕ ытти задачăсем пирки мĕн калас кăмăл пур?**

– Ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕсене информатизацилес тĕлĕшпе умра тăракан тепĕр пысăк задача вăл – патшалăх услугисемпе тивĕçтерме кирлĕ даннăйсене федераллă патшалăх информатизаци системипе усă курса (СМЭВ – система межведомственного электронного взаимодействия) ведомствăсем хушшинче парса илессине йĕркелесси. ЧР ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби услуга палăртрĕ – «Палăртнă йĕркепе ĕççĕррисем тесе шута илнĕ граждансене социаллă тӳлевсем парасси». Унпа тивĕçтерес тесен ведомствăсем хушшинчи çыхăну кирлĕ. Асăннă услугăпа тивĕçтернĕ чухне Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ поставщик, ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕсем – потребительсем шутĕнче. Саккунпа килĕшӳллĕн ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕсен заявленийĕпе ЧР Пенси фончĕн уйрăмĕ ĕççĕр шутланакан гражданинăн (страхланнă çыннăн) стажĕ пирки 5 кун хушшинче сведени тăратма тивĕç. Çакă вăл ĕççĕр çынна пособи тӳлесе тăрассин тапхăрне тăсса пама кирлĕ. 2012 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнче РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕпе пĕр-пĕрне кирлĕ информаципе электронлă майпа тивĕçтерессипе пĕрле çыхăнса ĕçлесси пирки килĕшĕве алă пуснă. Кунпа пĕрлех çак ĕçсене кирлĕ шайра туса пырассишĕн икĕ енчен те ответлисене палăртнă.

**– «Электронлă ĕç паракан» («Электронный работодатель») программăна пурнăçа кĕртесси çинче чаранса тăмăр-ши?**

– Ĕçпе тивĕçтерекен центр ку программăна пурнăçа кĕртессипе ĕçлеме тытăнчĕ ĕнтĕ. Паянхи куна 4 организацире ку программăн тест вариантне вырнаçтарнă. Çак уйăх вĕçлениччен татах 13 организаци хăйсен отчечĕсене тата сведенийĕсене çак программăн тест варианчĕпе ĕçпе тивĕçтерекен центра тăратма тытăнать. Асăннă программа патшалăх услугисемпе электронлă майпа тивĕçтерессипех çыхăннă. Унпа усă курни ĕç паракан организацисене Контур-Экстерн хӳтĕленĕ çыхăну каналĕпе усă курса офисран тухмасăрах çак информацисене ĕçпе тивĕçтерекен центра тăратма май парать: патшалăх услугине илессипе заявлени-анкета; ĕçлекенсем кирли пирки сведенисем; ĕçлекенсем кирлĕ марри пирки сведени; ют çĕршыв çыннисене ĕçе илесси пирки сведени; çынсене ĕçрен хăтарасси пирки сведени; малашне мĕнле кадрсем кирлĕ пуласси пирки сведени; ĕçпе туллин тивĕçтерменни пирки сведени; квотировани пирки отчет; хатĕрленĕ сведенисене Контур-Экстерн çыхăнăвĕн ятарлă операторĕн каналĕпе тăратасси; панă отчетсене илнĕ пирки сведени илесси – хăш вăхăтра илнине фиксацилесси; туса хатĕрленĕ тата ярса панă документсен реестрне туса пырасси.

Ĕçпе тивĕçтерекен центр организаци адресĕпе çак документсене ярса пама пултарать:

– документсене йышăннине çирĕплетни;

– ыйту çине хурав;

– ваканси валли кандидатсен списокĕ;

– ĕç шыракансем пирки резюме (пĕтĕмлетӳ).

«Электронлă ĕç паракан» усă курни Пĕтĕм Раççейри вакансисен банкĕн пахалăхне ӳстерет. Ку программăна «КАТАРСИС» программа комплексĕпе çыхăнтарнă.

Ĕçпе тивĕçтерекен пур центрсенче те Интернет урлă skype видео-чат функцийĕпе калаçу мелĕпе çыхăнма май пур. Çакă ĕççĕр граждансене ĕç паракансемпе калаçусем ирттерме май туса парать. Чăваш Енри ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби skype урлă ĕççĕр граждансене юрăхлă ĕç вырăнĕ тупассипе услуга парассин технологине туса хатĕрленĕ.

Ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕсем малашне çӳлте асăннă çĕнĕ технологи мелĕсем епле пурнăçа кĕрсе пынине тата вĕсемпе усă курнине вĕçĕм тĕрĕслесе тăрĕç. Апла пулсан çынсене ĕçпе тивĕçтерес енĕпе патшалăх услугисемпе усă курасси меллĕрех те ансатрах пулĕ, унпа усă куракансен шучĕ те ӳссе пырĕ. Малашне вара районти пур предприятисемпе организацисем те пирĕнпе çак çĕнĕ технологисемпе усă курса тачăрах ĕçлесе пырасса шанас килет.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

# Р. Тимофеев: «Пĕр саплăк çĕре те куçран вĕçертмелле мар»

**(Вĕçĕ. Пуçл 1-мĕш стр.)**

Çав хушăрах ял тăрăхĕн бюджечĕ пĕчĕк тетпĕр. Вырăнта çине тăманнипе бюджета кĕрес укçа унта кĕмесĕр сахал укçа-тенкĕпех саплашăнса пурăнаççĕ ял тăрăхĕсенче. Ростислав Николаевич ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене августăн 20-мĕшĕччен район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайне арендăна илнĕ, харпăрлăха куçарнă çĕрсем пирки информаци тăратма хушрĕ. Унта йăлт паллă пулмалла, кам çĕре арендăна е харпăрлăха илнĕ, кам усă курать, камăн пушă выртать çав çĕр лаптăкĕ, саккунпа килĕшӳллĕн тунă-и документсене çав çĕрсемпе, аренда килĕшĕвĕ пур-и е çук, харпăрлăха куçарнине йĕркене пăхăнса тунă-и?

– Кашни саплăк çĕре темиçе хутчен тĕрĕслемелле: унпа усă кураççĕ-и е вăл ахаль пушă выртать. Ку ĕçе сирĕн пĕрре те куçран вĕçертме юрамасть, – терĕ Ростислав Николаевич ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене.

Е тата нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕ уйăрса парассине илер. Ку енĕпе те районта вăхăта сая ямасăр ĕçлемелле. Тĕрлĕ ял тăрăхĕнче ӳкерчĕкĕ те тĕрлĕрен. Калăпăр Ильинка ял тăрăхĕнче черетре 8 çын. Кунта 21 çемье валли çĕр пуррине палăртать ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.В. Перцев. Муркаш ял тăрăхĕнче нумай ачаллă 13 çемье çĕр илес кăмăлпа черете тăнă пулсан, вĕсенчен 7-ĕн юлнă. Вĕсене валли Çурлатринче, Муркашра пăхса хунă çĕрсем пур. Оринин ял тăрăхĕнче ку тĕллевпе уйăрмалли çĕрсем пур, хальлĕхе вара çĕр лаптăкĕ ыйтакан нумай ачаллă пĕр çемье те ял тăрăхне ку ыйтупа килмен.

Ку списока тата тăсма пулать. Сăмаха татса çакна палăртмалла, районĕпе пурĕ тӳлевсĕр çĕр лаптăкĕ илме тивĕçлĕ учета илнĕ пур 50 çемьене те октябрĕн 10-мĕшĕччен çĕр лаптăкĕпе тивĕçтермелле – çакăн пек тĕллев лартрĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем умне. Çавăн пекех вăл çĕр пайĕсене малашлăха пăхса хатĕрлемелли çинчен палăртсах каларĕ: вăл паянхи нумай ачаллă çемьесене тивĕçтерме те çиттĕр, малашлăхра пулакан нумай ачаллă çемьесен те çĕр пайне кĕтсе хăшкăлмалла ан пултăр.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашлăвĕнче тата ытти ыйтусене те пăхса тухрĕç. Çав шутра – республикăра иртекен муниципаллă служащисен конкурсне хутшăнассине те. Район администрацийĕн пуçлăхĕ çак конкурса кашни ял тăрăхĕн хутшăнмаллине палăртсах каларĕ.

Канашлăва вĕçленĕ май Ростислав Николаевич ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене çапла каларĕ:

–Ял тăрăхĕн территорийĕнче пулса иртекен кирек епле ĕçшĕн те эсир яваплă пулса тăратăр: вырма пырать-и, шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлемелле-и, пушар хăрушсăрлăхĕпе ыйту татса памалла-и – çак тата ытти пур ыйтупа ял тăрăхĕн пуçлăхĕ яваплă пулса тăрать.

Кунта урăх нимĕн те хушса калаймăн, хушса калама та çук. Район администрацийĕн пуçлăхĕ калашле, канашлура пăхса тухнă ыйтусене палăртнă вăхăтра татса памалла кăна.

**Л. ПАВЛОВА.**

Пурнăç утти

# Çемье çавăрнăранпа – 55 çул

Çыннăн хăйĕн ĕмĕрĕнче йывăç лартса ӳстермелле, кил-çурт çавăрмалла, çемьеленсе ача-пăча пăхса ӳстермелле тенĕ мĕн ĕлĕкех чăвашсем. Ку чăнах та çапла ĕнтĕ. Акă Çĕньял Орининта пурăнакан Галина Ивановнăпа Гурий Прохорович Ивановсем хăйсен ĕмĕрĕнче йывăç лартнă, кил-çурт çавăрнă, сакăр ачине тĕрĕс воспитани парса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине тăратнă. Пысăк хисепе тивĕç Ивановсем пĕр çемье çавăрса ĕмĕр вĕçне тухиччен пĕрле килĕштерсе пурăнма тĕв тунăранпа августăн 6-мĕшĕнче 55 çул çитрĕ. Чăннипех те телейлĕ çемье тетпĕр вĕсем пирки.

Çемье пуçĕн Гурий Прохоровичăн ĕç çулĕ пуян. Вăл 1957 çулта çартан таврăннă хыççăн водитель, газооператор, завхоз пулса тимленĕ, мĕн тивĕçлĕ канăва тухичченех тăван хуçалăхра вăй хунă. Нимĕнле ĕçрен те пăрăнман, ачисене те çавнах вĕрентнĕ. Искусство тĕлĕшĕнчи ăсталăхĕ те çителĕклĕ унăн. Халăх театрĕнче тĕрлĕ спектакльте вылянă, халăх хорĕнче юрланă. Вăл тивĕçнĕ хавхалантарусем чылай, правительство шайĕнчисем те пур. Çулсем кайнипе унăн сывлăхĕ самай хавшарĕ, апла пулин те пушă вăхăта ахаль ирттермест вăл. Гурий Прохорович тăтăш алă ĕçĕ тăвать, шăпăр çыхать тата ытти те. 1957 çулта Гурий Прохорович Муркаш хĕрĕпе Галина Ивановнăпа çемье чăмăртать, çапла вара çамрăксем пĕр сукмакпа утма пуçлаççĕ.

Галина Ивановна Муркашри вăтам шкултан вĕренсе тухать. Мĕн ачаллах хăй пурнăçне шкул ĕçĕпе çыхăнтарма шутланăскер, учительсем хатĕрлекен института çул тытать. Химипе биологи факультетĕнче вĕреннĕ хыççăн 1955 çулта Орининти шкулта ачасене вĕрентме пуçлать. Кунта вăл тăрăшулăхпа тата пултарулăхпа палăрать, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Галина Ивановнăн вĕренекенĕсем тĕрлĕ кĕтесре пысăк ĕçсенче тимлеççĕ. Халĕ вĕсенчен хисеплĕ вĕрентекен тав сăмахĕсем, ăшă саламсем илет. Çемье вучахне упракан, ăна яланах хĕмлентерме тăрăшакан Галина Ивановнăн шкулта ĕçленĕ стажĕ 32 çулпа танлашать. Ĕçне кура вара хисепĕ: Тав çырăвĕсем, Хисеп грамотисем, медальсем.

Хисеплĕ мăшăр халĕ кĕçĕн ывăлĕн Володьăн çемйипе килĕштерсе пурăнать. Вĕсен ырă сĕнĕвĕсем вара çамрăксемшĕн халĕ те вырăнлă. Гурий Прохоровичпа Галина Ивановнăн 16 мăнук тата 8 прамăнук.

Ял-йышра Ивановсем сăпайлăхпа, ырă кăмăлпа палăрса тăраççĕ. Малашне те тĕрĕс-тĕкел пурăнма хисеплĕ çыннăмăрсене ырлăх-сывлăх сунатпăр.

**Ю. УТКИНА,**
**Мулкачкассинчи библиотека пункчĕн библиотекарĕ.**

# Спартакиадăра – спорта чăнласа юратакансем




Иртнĕ шăмат кун Муркашра çанталăкĕ те ытти çĕртинчен хĕвеллĕрех пулчĕ пулĕ, çыннисем те савăнăçлăрах, илемлĕрех курăнчĕç. Сăлтавĕ вара – Физкультурник кунне халалланă спартакиада. Муркаш ял тăрăхĕнче ăна пĕрремĕш хут кăна ирттермеççĕ, анчах та ку хутĕнче спартакиадăна спорта чăнласа юратакансем пуçтарăнни палăрчĕ. Пурте хăпартлануллă кăмăллă: шӳтлесе те илеççĕ, стартсем умĕнхи хусканусене те хаваспах тăваççĕ. Командăсенче çамрăксем ытларахчи те ырă шанчăк çуратмасăр хăвармарĕ.

Спартакиадăн тĕп судйи Александр Куликов ăмăртусен программипе паллаштарчĕ: малтанах – эстафета, ун хыççăн – тĕрлĕ енлĕ ăмăртусем.

Эстафета икĕ чупупа иртрĕ. Çавăнпа та кашниех лайăх вăхăт кăтартассишĕн тăрăшрĕ. Кунта Муркашри пушар чаçĕн команди хăй чи хăвăрттине çирĕплетсе пачĕ. Тĕрлĕ чупусенче ăмăртнă район администрацийĕн тата Муркаш райпо командисен, финиша çитнĕ минучĕсемпе çеккунчĕсем пĕр пек пулнăран, иккĕшĕн хушшинче тепĕр хут вăй висçме тиврĕ. Çапла вара райпо команди иккĕмĕш, администраци команди виççĕмĕш пулчĕ.

«Сывлăх» ФСК залĕсенче пĕр вăхăтрах дартс, вăй гимнастики, сĕтел çи теннисĕн ăмăртăвĕсем иртрĕç. Дартсра тата сĕтел çи теннисĕнче райпо команди палăрчĕ. Вăй гимнастикинче администраци командине çитекенни пулмарĕ. Вăл вăхăтра урамра пăшалтан тĕл перекенсем те хăйсене тĕрĕслерĕç. Кунта пухнă очкосемпе администраци команди мала тухрĕ.

Çак ăмăртусем пурте вĕçленсен чи интересли пуçланчĕ – канат туртасси. Муркаш ял тăрăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан С. Ермолаев спартакиадăна уçнă май спорт кăмăл-туйăма çирĕплетет, командăн пĕрлехи кăмăл-туйăмне вăйлатать тенине шăпах командăсем канат туртнă чух туллин туйса илме май пулчĕ те. Пĕр-пĕрне туйни, ăнланни – акă мĕн хуçаланчĕ командăсенче. Уйрăмах пушар чаçĕн, «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн командисем кăмăл-туйăм енчен çирĕппине кăтартса пачĕç. Мĕнех, вĕсен ĕçĕ те çакна ыйтать. Апла пулин те ку кĕрешӳре каллех администраци команди вăйлăрах пулчĕ.

Пур ăмăртури очкосене шутласа пĕтĕмлетнипе район администрацийĕн команди **(сăн ӳкерчĕкре)** çĕнтерӳçĕ пулма тивĕçрĕ. Хыççăнхи призлă вырăнсенче – райпо тата пушар чаçĕн командисем. Тăваттăмĕшпе пиллĕкмĕш вырăнсене Муркашри тĕп больницăн тата «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн командисем тухрĕç.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕсем Л. Тарасова тата В. Ананьев та спартакиадăна хаваспах сăнарĕç. Владислав Кириллович Олимп вăййисенче чăваш спортсменĕсем лайăх ăмăртни паянхи кун Муркашсене те хавхалантарасса шанса спартакиадăна уçнă май пурне те уявпа саламларĕ. Лилия Юрьевна вара ăмăрту пуçлансанах кам, тĕрĕсрех каласан мĕн, çĕнтерессине халех пĕлетĕп – командăсен пĕрлехи кăмăл-туйăмĕ, тесе пачах та йăнăшмарĕ. Çĕнтерӳçĕсемпе призлă вырăн йышăннисене парнесемпе дипломсем парса чысланă чухне те спорта юратакансем çирĕп команда мĕн иккенне кăтартрĕç. Команда ăнăçăвĕ кашнин çитĕнĕвĕнче пулнине.

Муркаш ял тăрăхĕн администрацийĕ хатĕрленĕ парнесем вара сывă пурнăç йĕркине тытса пыма май параканнисем пулчĕç: шашка-шахмат наборĕсем те, дартс та, мечĕксем, бокс груши тата ытти тĕрлĕ спорт хатĕрĕ. Тинех чашăк-тирĕк тата чейник мар – çак пĕтĕмлетӳ çийĕнчех çуралчĕ, кăмăла татах та ытларах хăпартрĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Хушу

# Ку хутĕнче «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнисем тăххăрăн

**ЧР Министрсен Кабинечĕ 2012 çулхи июлĕн 26-мĕшĕнче 351-р № хушу кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн республикăри граждансен татах тепĕр ушкăнне ĕç стажне кура «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят панине çирĕплетнĕ. Вăл шутран Муркаш районĕнчен:**

**Артемьева Анна Ивановна (Çурлатри).**
**Вершков Николай Ильич (Ойкас).**
**Вязов Рево Михайлович (Çеменкасси).**
**Иванова Галина Андреевна (Москакасси).**
**Матюшкина Клавдия Егоровна (Милютакасси).**
**Николаева Любовь Егоровна (Тойкилтĕ).**
**Смирнова Ирина Денисовна (Кашмаш).**
**Трофимова Нина Егоровна (Муркаш).**
**Царев Петр Никонорович (Нӳрет).**

**Асăрхаттарни: «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ çӳлте асăннă граждансене удостоверенисем патне районти социаллă хӳтлĕх пайне кĕрсе тухма ыйтаççĕ.**

## Прогноз погоды

| | среда 15 августа | | | | четверг 16 августа | | | | пятница 17 августа | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +14 | +20 | +20 | +16 | +15 | +18 | +19 | +15 | +14 | +17 | +20 | +16 |
| Давление мм | 750 | 748 | 747 | 746 | 746 | 744 | 743 | 744 | 745 | 744 | 743 | 742 |
| Влажность % | 84 | 69 | 77 | 89 | 93 | 81 | 69 | 74 | 83 | 71 | 57 | 69 |
| Ветер м/сек | 3 | 4 | 5 | 2 | 4 | 5 | 8 | 4 | 4 | 5 | 6 | 3 |
| | В | В | В | В | В | В | С-В | С-В | В | В | С-В | С-В |
| Солнце восход / заход | | 05:25 | 20:28 | | | 05:27 | 20:26 | | | 05:29 | 20:23 | |
| Луна восход / заход | | 02:45 | 18:55 | | | 03:58 | 19:18 | | | 05:15 | 19:39 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ООО «Виктория»**
* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.
Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 18-20.**

**В магазине «Детский мир» (ООО «Универмаг») в отделе обуви, находящийся по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4, 2 этаж, проводится распродажа мужской, женской и детской летней обуви со скидкой 20 процентов.**
**Приглашаем всех к нам за покупками!**
**Тел. для справок: 62-5-57.**

* * *

**Продаю доски дубовые, необрезные, толщина 7–8 см, разной длины. Цена договорная. Тел.: 8-908-307-07-44, дом.: 63-0-39. 1-2.**

* * *

**Продаю березовые дрова свежей рубки. Т.: 8-903-065-58-68. 1-2.**

* * *

**Пыл хурчĕсем сутатпăр. Тел.: 67-5-52; 8-927-992-70-10.**

* * *

**Срочно требуются рабочие на уборку картофеля в Спасский район Нижегородской области. Оплата высокая. Тел.: 8-902-687-01-77.**

* * *

**Продается однокомнатная квартира (33 кв. м., 3 этаж) в центре с. Моргауши. Цена договорная, около 1 млн. руб. Контактный тел.: 8-916-589-65-95. 2-2.**

* * *

**Продаем зерно, солому нового урожая. Тел.: 8-937-958-51-14.**

* * *

**Сурăх, така туянатăп. Тел.: 8-937-391-68-08. 1-2.**

* * *


ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Кадастровым инженером Николаевым Андреем Витальевичем, 429530, Моргаушский р-н, с. Моргауши, ул. Ленина, д.41/5, тел.: 8(83541)63-4-39. № квалификационного аттестата кадастрового инженера: 21-11-68 от 28.04.2011 г. в отношении земельного участка из категории «земли населенных пунктов», с кадастровым номером 21:17:120601:4, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский р-н, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Нижний Томлай, ул. Магазинная, дом 5

выполняются кадастровые работы по уточнению местоположения границы и площади земельного участка, находящегося в собственности Бычковой Альбины Викторовны. Заказчиком кадастровых работ является Бычкова Альбина Викторовна. Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границы земельного участка состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский р-н, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Нижний Томлай, ул. Магазинная, дом 5. 14. 09. 2012 г. в 10 часов 00 минут.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: с. Моргауши, ул. Ленина, д.41/5. Межевой организации ООО «Аршин».

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности принимаются с 15. 08. 2012 г. по 15. 09. 2012 г. по адресу: с. Моргауши, ул. Ленина, д.41/5.

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: Чувашская Республика, Моргаушский р-н, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Нижний Томлай, ул. Магазинная, дом 4; Ярабайкасинское сельское поселение, д. Нижний Томлай, ул. Магазинная, дом 6.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.


## Объявления

**Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, песок, гравмассу, щебень, кирпич.**
**Тел.: 8-960-307-41-78. 4-10.**

Принимаем КАРТОФЕЛЬ на крахмал.
Место приемки:
Вурнарский район, д. Кумаши.
По вопросам сдачи картофеля просим обращаться по телефонам:
(8352) 44-11-65, (83538) 2-70-43
1-6.

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя.**
**Замер. Доставка бесплатно.**
**Низкие цены. 4-10.**
**Тел.: 8-987-576-65-62.**

**Продаю а/м ВАЗ-21074 2010 г.в. Цвет «Сочи», без пробега, за 160 т. руб. Т.: 8-927-849-43-70.**

**5 пăруланă хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Т.: 8-927-855-08-50.**

**Торговый Комплекс "ТЕРМИНАЛ"**
**КИРПИЧ**
**ГАЗОБЕТОН / ГАЗОСИЛИКАТ**
**более 500 видов**
Тел: (8352) 30-55-10, 50-54-25 www.terminaltk.ru
ЧР, г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ

**Паломнические поездки:**
**-Дивеево – еженедельно (пятн.-воск.) – 1000 руб.;**
**-Псково-Печерский монастырь – (г. Печора, Псковская обл.) с 26 по 29 авг. – 5000 руб.**
**Обр. с. Моргауши, ул. Мира, 6 (3 этаж. «Ростелеком»), Благотворительный фонд «Возрождение храмов».**
**Т. 8-905-342-11-50.**


Муниципальное унитарное предприятие жилищно-коммунального хозяйства «Моргаушское» Моргаушского района Чувашской Республики глубоко скорбит по поводу смерти отца начальника Сундырского участка МУП ЖКХ «Моргаушское» Мамутина А.П.
**МАМУТИНА**
**Петра Михайловича.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.**
**Пичете панă 14.08.2012 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4629.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.